Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N31 (4600) *1998 çулхи март (пуш) уйăхĕн 20-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

# Районта - "Астăвăм Кĕнеки"

**Пирĕн пата республикăри "Астăвăм Кĕнекин" пысăках мар тиражĕ çитрĕ. Питĕ нумай вăхăт хушши кĕтрĕмĕр эпир ăна. Ку кĕнеке - 1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра пуçĕсене хунă салтаксемпе офицерсене ĕмĕрлĕхе пирĕн асра юлнин палли, вĕсен паттăрлăхне хисеплени. Çак кĕнекере Тутарстанти Октябрь тата малтанхи Тельман районĕсенче çуралнă 9607 çыннăн хурлăхлă списокĕ, вĕсене палăртнă çар комиссариачĕсенчен кăна мар, СНГ ăн ытти облаçĕсемпе çĕршывсенчи çар комиссариачĕсенчен те вăрçа илсе кайнă. Вĕсем çапăçу хирĕсенчен каялла таврăнман, çапăçусенче пуçĕсене хунă, госпитальсенче вилнĕ, вăрçăри вут-çулăмлă çул-йĕр çинче хыпарсăр çухалнă.**

"... Тăвата вăрăм та юнлă çул. Вĕсем халĕ те вĕçĕмсĕр туйăнаççĕ. Кашни кил-çурта хуйхă пырса çапатчĕ. Вилни çинчен пĕлтерекен хутсем юлашки шанчăка пĕтеретчĕç.

... Çĕнтерÿ хаклачĕ. Тутарстанăн 560 пин ытла ывăлĕпе хĕрĕ тăван çĕрсенчен вăрçа кайрĕ, вĕсенчен 300 пин ытла каялла таврăнаймарĕç. Вĕсем Тăван çĕршыва хÿтĕлесе пуçĕсене хунă.

... Çулсем иртеççĕ, ăрусем улшăнаççĕ. Отечественнăй вăрçă вĕçленнĕренпе чылай çул иртрĕ. Этемлĕх астăвăмĕ çеç Тăван çĕршыва хÿтĕлекен ячĕсене тепĕр ăрăва парса асра хăварма пултарать.

... Халăх вăрçă çинчен ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ. Яланах асра тытасси пирĕн парăм, кăмăл-туйăм хушни, эпир, чĕррисем, пирĕнтен уйрăлса кайнисемшĕн юлашкине тума пултарни, апла пулсан - вĕсене вилĕмсĕр туни.

... Çак вăхăтра пурăнакан, сана чĕнсе калатпăр! Пулас ăрусем, сире чĕнсе калатпăр! Пуçĕсене хунă паттăрсен ячĕсене хисеплесе асра тытăр, сыхлăр, хăварăн ачăрсемпе мăнукăрсене пĕлтерсе хăварăр. Çакна астăвăр: вилнĕ кашни çын пирĕн пурнăç телейлĕ пултăр тесе хăйсене шеллемесĕр çапăçнă".

## Республикăри "Астăвăм Кĕнеки" редакци коллегийĕ чĕнсе каланинчен

"Астăвăм Кĕнекине" ялсенчи самоуправлени Совечĕсене панă, унта вилнĕ е хыпарсăр çухалнин кашнин ятне палăртнă. Списоксене вырăсла тата тутарла çырса алфавит йĕркипе вырнаçтарнă.

Питĕ шел, çапах та кĕнекесем сахал, çавăнпа та вĕсене малтанах мăшăрĕсем вилнĕ е хыпарсăр çухалнă тăлăх арăмсене, çемьере 5,4,3 çын вилнисен тăванĕсене памалла.

"Кĕнекене" презентацилессине тата парассине пысăк яваплăх туйса ирттермелле. Çакна ячĕшĕн кăна тумалла мар.

Çак кĕнекене тăлăх арăмсене, тăванĕсене, вăрçă ветеранĕсене лăпкă лару-тăрура, сĕтел хушшинче чей ĕçнĕ май пама, вилнĕ паттăрсене хисеплесе пĕр минут шăп тăма сĕнетпĕр. Шкулта вĕренекенсене чĕнсен те аван пулмалла, "Астăвăм кĕнекинче" вĕсен аслашшĕсемпе кукашшĕсем те пур вĕт, çакă аслисене хисеплеме вĕрентме пулăшĕ.

Тĕп списокра сире интереслентерекен хушамат çук пулсан, 384 тата 608 страницăсенчи хушма списоксене пăхмалла.

**Çакна асăрхаттаратпăр:** ***списоксенче йăнăш пичетленнĕ вырăнсем, хушаматсене тĕрĕсех мар çырни, кама та пулин списока кĕртменни те пулма пултарать. Çаксене курсан редакцие çыру ямалла, унта тĕрĕс хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, çурлнă çулне, вырăнне, вăрçа хăш çар комиссариатĕнчен кайнине, çар званине, çар чаçне, хăçан вилнине, ăçта пытарнине палăртмалла.***

**Редакци адресĕ: 420014, г.Казань, Кремль, здание адм.дирекций музея-заповедника "Казанский Кремль", редакция "Книга Памяти".**

**И.САНДЛЕР,**
**"Астăвăм Кĕнеки" корреспонденчĕ.**

## Коллективра хисеплеççĕ

*Агриппина Ивановна Илюхина (ÿкерчĕкре) - "Родина" хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес отрасльте малта пыракан ĕçчен. Фермăра доярка пулса нумай çул вăй хунă май коллектив пурнăçĕнче тĕрли пулнă: ăнăçлăхсем те, начарри те. Агриппина Ивановна пушмак пăрусен ушкăнне те темиçе хутчен пăхнă, кайран вĕсем пысăк продуктивлă ĕнесем пулнă. Хăйĕн ĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланипе унăн ушкăнĕнчи кăтартусем те начар мар. Иртнĕ çул та хуçалăх дояркисем хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăнса вăл хаклă парнене тивĕç пулнă. Хальхи вăхăтра Агриппина Ивановна хуçалăхри "Çĕнĕ пурнăç" кооперативри хисеплĕ ĕçченсенчен пĕри шутланать.*



Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕ.

<u>Вĕрентÿ хыпарĕсем</u>

## Ятарлă курс ирттернĕ

Иртнĕ эрнере районти вĕрентÿ пайĕ хăйĕн ертÿçĕ-кадрсем валли ĕç сыхлавĕ тата хăрушсăрлăх техникине пăхăнас тĕлĕшпе ятарлă курс йĕркеленĕ. Занятисене "Çыннăн пурнăçĕпе сывлăхне хÿтĕлесси" регионаллĕ вĕрентÿпе методика центрĕн директорĕ Т.Н.Зимина тата Тутарстан Республикин Вĕрентÿ министерствин специалисчĕ Ф.С.Ахунов ирттернĕ. Курсра пурĕ 250 çын вĕреннĕ, çав шутра районти вĕрентÿ пайĕн методисчĕсемпе инспекторĕсем, пай подразделенийĕсен ĕçченĕсем, районти вăтам, тулли мар вăтам тата пуçламăш шкулсен директорĕсем, вĕсен вĕрентÿпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсем, шкул çулне çитмен ачасен учрежденийĕсен ертÿçисем, хуçалăх енĕпе пулăшакансем. 40 сехетлĕ программăна итленĕ хыççăн вĕсем комисси умĕнче çырса экзаменсем тытнă, билетсем çине хуравланă. Билетсем тăрăх ăнăçлă хуравлакансене ятарлă дипломсем панă. Çырса тытнă экзаменсен результачĕсене республикăн столицинче палăртĕç.

## Сутса çеç тупăш илме пулать

Хальхи вăхăтра продукцие туса кăларасси кăна мар, ăна сутасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хуçалăхсен кассисене укçа кĕрсен те вăл, тĕпрен илсен, сĕт сутнă укçа. Икĕ уйăх итогĕсене илсен, пĕр ĕне пуçне куçарса шутласан, патшалăх ресурсĕсене çак хуçалăхсем чи нумай сĕт панă: "Агрохимсервис" акционер обществин хушма хуçалăхĕ (548 килограмм), хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕ (533), "Первое мая" (525) тата "Родина" (515). Çаплах "Киклĕ", "Тĕрнеç", Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Татарстан" хуçалăхсенче те çак кăтарту пысăк. Сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче - 436-457 килограмм.

Анчах район тăрăх çак кăтарту тата та пысăкрах (315 килограмм) пулма пултаратчĕ. Çапах та МСОпа нефтебазăн хушма хуçалăхĕсенчен илсе килнĕ сĕт 110-122 килограмм çеç, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче, "40 лет Победы" хуçалăхра вара 200 килограма та çитмен.

Аш-какай сутассипе те кăтартусенчи уйрăмлăх пысăк. Район хуçалăхĕсем икĕ уйăх хушшинче 4907 центнер аш сутнă пулин те, вĕсенчен 44 проценчĕ çеç патшалăх ресурсĕсене кайнă. Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Тан", "Рассвет", "Тĕрнеç", "Татарстан" ассоциацисенче çак кăтарту 63-75 процентпа танлашать, сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕ вара выльăха аш-какай комбинатне кăна ăсатнă. Хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе, Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Черемшан" ассоциацийĕсем икĕ уйăх хушшинче сутнă ашăн 60-75 проценчĕ урăх каналсемпе кайнă.

Паллах, кашни хуçалăхăн тĕрлĕ ыйтусем нумай. Çапах продукцие пĕлсе тата тарăн шутласа сутсан кăна, сахал мар тупăш илме пулать, çакăн çинчен эпир пĕрре çеç мар çырнă ĕнтĕ.

## "Çуллахи" вăхăта куçатпăр

**Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă вăхăта шутламалли йĕркепе килĕшÿллĕн 1998 çулхи мартăн 29-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 25-мĕшĕччен çĕршывра "çуллахи" вăхăт палăртнă.**

**Ку тĕлĕшпе Раççĕй Федерацийĕн пĕтĕм территорийĕнче 1998 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче 2 сехетре сехет йĕппisene 1 сехет мала куçармалла, тесе пĕлтерНĕ Раççейĕн Госстандарчĕ çумĕнчи Вăхăтпа эталон частотисен енĕпе ĕçлекен ведомствăсем хушшинчи комисси.**

**ИТАР-ТАСС.**

## Çамрăксен çуртĕнчи тĕлпулусем

Хулара нумаях пулмасть уçăлнă Çамрăксен çурчĕ майĕпен çамрăк ăрăва воспитани паракан центра çаврăнать. Районти вĕрентÿ пайĕ йышăннипе март уйăхĕнче "Йĕркеллĕ пурнăç" уйăхлăх ирттерме палăртнă, унта хулари тата районти шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсене ятарлă графикпа Çамрăксен çуртне тĕлпулусене чĕнеççĕ. Çапла, районти вĕрентÿ пайĕн заведующийĕпе Н.Х.Абдуллинпа, район прокурорне пулăшаканпа Д.В.Самигуллинапа, шалти ĕçсен пайĕн çула çитмен ачасем хушшинче йĕркене пăсассине сирсе ярас тĕлĕшпе ĕçлекен ОППН специалисчĕпе Л.В. Емелькинапа, ÿт-тир чирĕсен врачĕпе В.С.Курмакаева венерологпа, çар комиссариачĕн пĕрремĕш уйрăмĕн начальникĕпе И.А.Хафизуллинпа, районти тĕп больницăн пай заведующийĕпе В.Д.Тимофеева врач-гинекологпа, С.И.Федотов врач-наркологпа тата ыттисемпе тĕл пулни вĕсене хальхи йывăр пурнăç çине çĕнĕлле пăхма, шкулсенче тата çемьесенче калаçман япаласем çинчен специалистсенчен илтме май пачĕ. Çаплах çамрăксен çар комиссариачĕн представительне ыйтусем пама тата унăн хуравĕсене илтме май пулчĕ. Районти хисеплĕ специалистсем тĕрлĕ ыйтусем тĕлĕшпе мĕн шутланине ачасене пĕлме интереслĕччĕ.

Кунсăр пуçне, ял ачисем хулари музыка шкулĕнче вĕренекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнине курма пултарчĕç, хăйсене валли çĕнĕ тĕнче уçрĕç. Çав кун ачасем Çамрăксен çуртĕнче пулнисĕр пуçне, хула курса çÿрерĕç, сахăр заводĕнче пулчĕç, бассейна курчĕç, кĕскен каласан, хăйсен пушă вăхăтне усăллă ирттерчĕç.

Кашни кунах ялсенчи 6-7 шкулăн аслă класĕсенче вĕренекенĕсем Çамрăксен çуртне тĕлпулусене килеççĕ, кунта воспитани урокĕсем илеççĕ. Апрель уйăхĕнче хулари шкулсенче вĕренекенсен черечĕ çитĕ. Хальхи тĕлпулусене хутшăнакансем çакăн пек мероприятисене ытларах ирттерме ыйтаççĕ. Хуралтăвĕнчи, Кульбаево Марасари, Тури Нурлатри вăтам шкулсенчен çакăн пек содержаниллĕ çырусем редакцие чылай килчĕç.

# Çĕнĕ технологисен çул-йĕрĕпе

**Нурлатри госсанэпидслужба хăйĕн професси пултарулăхне Расçейĕн Сывлăх сыхлав министерствин Госсанэпиднадзорĕн Федераллă центрĕ умĕнче ĕненмелле кăтартса çирĕплетрĕ.**

Госсанэпиднадзорăн центрĕсен лабораторийĕсене аккредитацилес тĕлĕшпе тĕп органăн аттестаци комиссийĕ хăйĕн виçĕ кунхи анлă ĕç программине мартăн 14-мĕшĕнче каçхине вĕçлерĕ. Унăн вердикчĕ ырă кăмăллăччĕ: Нурлатри ЦГСЭН физикăпа хими тата бактериологи лабораторийĕсемпе алкоголлĕ шĕвексене, апат чĕртаварне, апат-çимĕç продукчĕсене, апат хутăшĕсене, консервантсене, ĕçмелли шыва тата ыттисене ГОСТ требованийĕсемпе килĕшÿллĕн гигиена енчен сертификацилеме юридически право илет. Пĕр сăмахпа каласан, аккредитацилесси питĕ анлă (экспертсем ăна тата та анлăлатнă), çакă заказчика ытлашши ĕçрен хăтарĕ. Сăмахран, эрехе экспертизăна, малтанхи пек, Хусана илсе каймалла мар, тĕпчесе пĕлме районти ЦГСЭНа пама пулать. Унăн услугисемпе вырăнти продукци туса кăларакансем те, потребительсем те, çаплах республикăри урăх районсенчисемпе кÿршĕ облаçсенчисем усă курма пултараççĕ. Нурлатри ЦГСЭН панă сертификатсен копийĕсене Федераллă центрта тума пултараççĕ.

Аккредитаци санэпиднадзор органĕсен пурнăçне темиçе çул каяллах çирĕп кĕнĕ. Нурлатри центрăн вара ун патне çулĕ кĕске те çăмăл пулман, финанс тăкакĕсем те сахал мар тухнă: лабораторисем Европа стандарчĕсемпе (!) килĕшсе тăмалла. Тутарстан Республикинче паянхи куна 90 санитарипе гигиена тата бактериологи лабораторийĕнчен 11-шне çеç аккредитациленĕ - вĕсем пурте Хусанта тесен те юрать. Нурлатри ЦГСЭН тĕп врачĕ Ильяс Вазыхович Андаров аккредитацилессипе çыхăннă хăйĕн питĕ яваплă шухăшне коллектива çитерме пултарнă тата çулталăк хушши унта пысăк ĕç пынă. Персонал хăйĕн професси пĕлĕвĕсене ÿстернĕ. Ĕç документчĕсен анлă пакетне тунă. Пÿлĕмсене çĕнетсе юсанă. Ку чухнехи çĕнĕ оборудовани туяннă. Çаксем пурте, паллах, йÿне ларман. Сăмахран, пĕр автоклав кăна - вĕсем темиçе кирлĕ - 78 миллион тенкĕ (деноминацилемен) тăрать, пĕр килограмм йодлă кали хакĕ - 600 пин тенкĕ. Халь пурте хаклă. Ку чухнехи технологисен çул-йĕрĕ çинчи çак утăма, пĕтĕм тĕнчипе йышăннăскер, малашне коллективăн профессионаллĕ тата обществăлла пултарулăхне ÿстернĕ май питĕ паха. Заказчиксемшĕн те усăллă.

- Паллах, Федераллă центр лабораторисем умне питĕ хытă требованисем кăларса тăратать, - каласа парать аттестаци комиссийĕн председателĕ, Расçейĕн Сывлăх сыхлав министерствин Госсанэпиднадзорĕн Федераллă центрĕн врач-бактериологĕ Неля Евдокимовна Стреляева. - Юлашки результат вара чылайăшĕнчен килет: коллектива тытса пынин практикинчен, ĕçе йĕркеленинчен, персоналăн професси ăсталăхĕнчен, пÿлĕмсен тата оборудовани шайĕнчен, тĕрĕслевсен методикинчен, вĕсен пахалăхĕнчен тата ыттинчен те. Çак лабораторисем мĕнле шайра пулни пĕлтерĕшлĕ мар - федераллă, республикăри, облаçри е сирĕнни пек, районти. Эпир кунти специалистсен пысăк квалификаци шайне, ертÿçĕсем ĕçе творчествăлла пуçăннине палăртатпăр. Шанăр, çакна пурнăçа кĕртме çăмăл мар ...

Н.Е.Стреляевасăр пуçне, комисси составĕнче Оренбург хулинчи ЦГСЭНăн санитарипе гигиена лабораторийĕн заведующийĕ Н.М.Амерзянова, Тутарстан Республикин Госкомсанэпиднадзорĕн лаборатори ĕç йĕркин, метрологи, стандартизаци тата аккредитаци пайĕн заведующийĕ А.В.Кривошеин, Тутар ЦГМиС апат-çимĕç продукчĕсемпе чĕртаварне сертификацилекен пай начальникĕ Л.А.Артамонова ĕçлерĕç. Тăваттăшĕ те дипломлă экспертсем. Вĕсем комисси ларăвне хутшăнма чĕнсен, хирĕçлеме май çукчĕ, кайма тиврĕ, кунта ЦГСЭН лабораторийĕсен коллективĕсем пурнăçланă тĕрĕслев задачисен результачĕсене пĕлтерчĕç.

Ĕç акă мĕнре: Мускавран кунта шифрланă растворлă пробиркăсем илсе килнĕ, лаборатори 2-3 кун хушшинче тĕпченĕ микроорганизма палăртмаллаччĕ (вăл сальмонелла тифимораум пулнă), теприн - пестицидсен шайне тата пăхăрăн, хура тăхланпа кадмин масса пайĕн хисеп çыхăнăвне. Лабораторисен ертÿçисем комиссие малтан официаллă протоколсем пачĕç, тĕпчевсен результачĕсемпе паллаштарчĕç. Çакăн хыççăн çеç Федераллă центртан килнĕ тĕрĕслев задачисен результачĕсемлĕ конвертсене уçрĕç. Вĕсене пурне те тĕрĕс тунă!

Бактериологипе хими лабораторийĕсен палăртса хунă тĕрĕслевĕсем халлĕхе иртрĕç. Çапах çитес вăхăтра, ЦГСЭН полномочийĕсене анлăлатасси çинчен официаллă документ илсен, вĕсем татах пулĕç. Кашни кунхи ĕçре ăна тĕплĕн, тĕрĕс, ăста пурнăçлĕç.

* * *

Çав каçах экспертсем Лениногорск хулине кайрĕç, темиçе кунран вара вĕсене Çыранçи Чаллăра кĕтĕç. Икĕ центр та I категориллĕ, пирĕн -II. Çакă Нурлатри ЦГСЭНшăн профессие аталантарма начар кÿршĕ мар.

**Т.НАЗАРОВА.**

**P.S. вырăнне. Мускавра пурăнакан Н.Е.Стреляеваран Нурлат çинчен ыйтсан, вăл çапла хуравларĕ:**

**- Хăтлă. Хуçа пурри туйăнать. Кунти çынсем ăна пурнăçшăн тата лайăхрах тума тăрăшаççĕ. Çурт-йĕр хăпартмалли хăш-пĕр проектсем питĕ оригиналлă пулни килĕшрĕ.**

## *Санăн çыннусем, Нурлат*



*Хĕрарăмăн ĕç биографийĕн тата тепĕр паллă уйрăмлăхĕ. Пединститутран вĕренсе тухнă хыççăн Мария Михайловна Спасова Нурлатри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулта физика вĕрентнĕ. Пысăк професиллĕ, хытă ыйтакан педагога асăрхамасăр май пулман: часах вăл Тутарстанти Аслă Канашра пирĕн районăн тивĕçлĕ представителĕ пулса тăнă. Пилĕк çула яхăн РОНОна ертсе пынă, парти райкомĕнче идеологи пайĕн заведующийĕ пулнă, районти ĕç тăвакан влаçа çирĕп тытса тăнă, 1988 çултанпа вăл нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин вĕрентÿпе-консультаци комбинатне ертсе пырать. Унăн ĕç кĕнекинче çырса пынисем улшăннă, çапах та хăй палăртнă тĕллевсене яланах пурнăçлама тăрăшать. Мĕнле йывăр пулсан та, яваплăха туйса, задачăсене ăнланса ĕçлет.*

*1997 çулта Нурлатри вĕрентÿпе консультаци комбинатне "Татнефть" акционер обществин çавăн пек подразделенийĕсем хушшинче чи лайăххи тесе палăртнă, нумаях пулмасть вара коллектив çакăншăн пама палăртнă парнене - компьютер класне илнĕ. Çакна Мария Михайловна тата унăн ĕçтешĕсем, управлени ертÿçисем тăрăшнипе тата хăш-пĕр цехсем пулăшнипе тивĕç пулнă.*

*... Халь акă çĕнĕ ушкăн пухаççĕ. Уйăхсем, кунсем сисĕнмесĕрех иртсе каяççĕ. Лекцисем, практика занятийĕсем, зачетсем - кунта вĕренекенсем часах ĕçре кирлĕ специальноçсем туянĕç. Нефтяниксем яланах кадрсем çителĕклĕ пулччăр тесе тăрăшаççĕ.*

*Н.Квашнина сăнÿкерчĕкĕнче: котельнăй операторĕсем экзамен параççĕ.*

# Пирĕн комитет потребительсен прависене хÿтĕлет

**Кашни çулмартăн 15-мĕшĕнче Пĕтĕм тĕнчери потребительсен прависене хÿтĕлекен куна палăртаççĕ. Пирĕн патра 1996 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче йĕркеленнĕ потребительсен прависене хÿтĕлекен район комитечĕн председательне Р.Г.СУФИЯНОВА эпир çак кун историйĕ çинчен, комитетăн ĕçĕсем, çаплах задачисем çинчен каласа пама ыйтрăмăр.**

Пĕтĕм тĕнчери потребительсен прависене хÿтĕлекен кун пĕтĕм тĕнчери потребительсен юхăмĕ пĕр шухăшлă пулнине пĕлтерет. Çак кун США президенчĕ пулнă Дж.Кеннеди потребительсене хÿтĕлемелли тăватă тĕп право декларацине алă пуснă хыççăн историе кĕнĕ. Унта таварсен хăрушсăрлăхĕн, информаци, тавар суйласа илмелли тата хăйсен шухăшне пĕлтермелли право кĕрет.

Пĕтĕм тĕнчери потребительсен союзĕ (МПС) тата тăватă право хушнă: потребителе мĕн кирлине тивĕçтермелли право, тăкака сапламалли право, потребитель вĕренĕвĕн прави тата таса тавралăх прави. Çак сакăр пункт Пĕтĕм тĕнчери потребительсен союзĕн ĕçĕн тĕп никĕсĕ шутланать.

Расçейре "Потребительсен прависене хÿтĕлесси çинчен" калакан Закон 1992 çулта вăя кĕнĕ, Тутарстанта вара ăна виçĕ çул иртнĕ хыççăн йышăннă. Çак закона пурнăçа кĕртме потребительсен прависене хÿтĕлекен Тутарстан Республикин патшалăх комитетне йеркеленĕ.

Потребительсен прависене хÿтĕлекен район комитечĕ патшалăх управленийĕн районти органĕ пулса тăрать, вăл потребительсен прависене хÿтĕлес ĕçсене йĕркеллĕ ертсе пырать, пĕчĕк предпринимательствăна аталантарассине, вĕсене пулăшассине, сертификатсене, пахалăха, тĕрĕслевпе инспекци, лицензи, хаксене тĕрĕслес ĕçе йĕркелет.

Район комитечĕ потребительсен прависене хÿтĕлессипе пысăк ĕç илсе пырать. Çапла, 1997 çул правăсене пăснăшăн 108 заявлени пулнă, вĕсенчен 99-шне потребительсем майлă татса панă. Таварсем тата услугăсем пахалăхлă пулманшăн потребительсене 19477,2 пин тенкĕ таварса панă. 171 тĕрĕслев иртнĕ, унта палăртнă 89 тĕслĕхе хăйсен ирĕкĕпе тÿрлетнĕ. Суту-илÿрен 298,9 пин тенкĕлĕх тавара пăрахăçланă, 18369 пин тенкĕлĕх штраф тÿлеттернĕ. Иртнĕ çул 2564 çынна лицензи панă.

Юлашкинчен çакна палăртса хăварас килет: хальхи вăхăтра потребительсен рынокĕнче тавар илекенсен тĕп хÿтлевçи потребительсен прависене хÿтелекен комитет пулса тăрать.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА**
**калаçнă.**

**Хуçалăхсенче - çулталăк отчечĕсем**

# Ĕçпе те, сăмахпа та пултараççĕ

"Киклĕ" хуçалăхра çулталăкри отчетлă пухура мĕн çинчен сăмах пырассине маларахах пĕлме пулатчĕ, анчах та калаçу çавăн пек уççăн пуласси çинчен вара эпир шухăшламан та. Киклĕ ялĕнче пурăнакансем ĕçлеме те, калаçма та пĕлеççĕ иккен: тухса калаçас текенсем те сахал мар пулчĕç, чылайăшĕ вырăнтанах каларĕç. Çакăн пек тума хуçалăх ертўçи Наиль Шараповпа ревизи комиссийĕн председателĕ Каюм Гатауллин тунă отчетлă докладсем пулăшрĕç. Докладсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăчĕç пулин те, вĕсем хуçалăх ĕçне тиврĕç. Хуçалăх председателĕ малтан пысăклатнă, кайран хуçалăха кооперативсене уйăрнă хыççăн тунă çулталăк итогĕсем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Хуçалăхри тĕрлĕ отрасльсенче тунă чылай çитĕнўсем районта тĕ[illegible]х пулма тивĕçлĕ пулин те, Наиль Шакирович вĕсене уйрăмшарăн тунă ăнăçлăхсем пек мар, пĕрле килĕштерсе ĕçленин итогĕсем тесе палăртрĕ. Юлашки икĕ-виçĕ çул хушшинче кунта ял хуçалăхне реформăлассин опычĕпе паллашас тĕллевпе мĕнле кăна авторитетлă делегаци пулман пулĕ. Чылай çĕрте вĕсен опычĕпе усă кураççĕ ĕнтĕ. Сăмахран, "Киклĕ" хуçалăхра ĕнесене кăкармасăр усрама 1996 çултах тытăннă, кайран ытти чылай хуçалăхсем вĕсенчен тĕслĕх илнĕ. Çав вăхăтра пуçаруçăсем хăйсем тата та шанчăклăрах утăм тунă - каллех районта пĕрремĕшĕсем пулса ĕнесене сумалли зала шведсен аппарачĕсемпе оборудованиленĕ. Çак икĕ пуçару лайăх результатсем панине кăтартас тесен даннăйсен темиçе цифрине илсе кăтартни те çителĕклĕ. Хуçалăх иртнĕ çул пĕр ĕнерен сĕт суса илессине 1155 килограмм ўстерсе, ăна çулталăкра 3665 килограма çитернĕ, çав шутра Кислеври фермăра - 3848 килограма, Киклĕри фермăра, çĕнĕ технологипе усă куракан çĕрте пĕр ĕнерен сĕт суса илесси 1398 килограма çитнĕ. Фермăри реконструкци ĕçĕсене пурнăçлани хуçалăха 182 миллион тенкĕ тупăш панă, тăкаксене виçĕ уйăх çурăра сапланă, кунта ăнлантарса пани кирлех те мар пулĕ тетĕп. Çав вăхăтрах хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх продукчĕсен хăйхаклăхĕ те чакнă, чăнах та, çак отрасль хăйне хăй саплаштарасси çинчен калама иртерех-ха, анчах та ку "Киклĕ" хуçалăхăн кăна мар, пĕрлехи ыйту. Çавăнпа кунта кооперативсем йĕркелесе тĕрĕс тунă, результатсем куç умĕнчех. Пĕлтĕр "Киклĕре" çĕр ĕçĕн икĕ енне - апатлăх тулă тата сахăр кăшманĕ акса ўстерес ĕçе пысăк тимлĕх уйăрнипе, вĕсем, мĕнле калас, çынсем пек пурăнаççĕ. Çавăнпа та пухура ĕç укçи çинчен никам та асăнакан пулмарĕ: хальхи вăхăт тĕлне кунта январь уйăхĕшĕн те ĕç укçи панă. Мĕншĕн тесен, элеватор пўлмине паха тырă чылай хывнă, сахăр кăшманне те районта чи нумай сутнă. Тырра усăллă вырнаçтарнăшăн та "Киклĕ" хуçалăх чи пысăк тупăш илнĕ, кунта вара район ертўçин тўпи те пур. Çакă ĕç укçин тăваттă пиллĕкмĕш пайне тўлесе татма май панă, ку вăл чĕрĕ укçапа 2 миллиард тенкĕ ытла шутланать. Тулă запасĕ те пур, сахăр заводĕнче те илмелли укça пур-ха. Çĕр ĕçĕ укçа тумалли çăлкуç пулса тăнă пулсан, ăна ĕç калăпăшне ўстернипе кăна мар, çаплах ăна туса кăларассинчи тăкаксене чакарнипе тунă. Сăмахран, пĕр центнер туллăн хăйхаклăхĕ çулталăкра 15 пин тенке чакнă, сутлăх хакĕнчен икĕ хут йўнерех пулни çур миллиарда яхăн таса тупăш илме май панă. Сахăр кăшманĕ те 800 миллион тенкĕ тупăш панă. Çавăнпа та "Киклĕ" хуçалăх иртнĕ ял хуçалăх çулне лайăх рентабеллĕхпе вĕçлениченчен тĕлĕнмелли çук.

Паллах, çак ăнăçлăхсем хăй тĕллĕн пулманни çинчен эпир каларăмăр ĕнтĕ. Докладчик икĕ тĕп фактора уйрăмах палăртса хăварчĕ: структурăллă улшăнусем тунипе, кооперативсене уйăрнипе вĕсене район ертўçисем мĕнпур енчен пулăшаççĕ, ял ĕçченĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăннипе пĕрлех ĕç результачĕсемшĕн пысăк яваплăх туяççĕ, çынсем ĕç çине хуçалла пăхма тытăннă. Çавăнпа та докладра ĕçре малта пыракансен хушамачĕсене ăнсăртран асăнса хăвармарĕç ĕнтĕ, кайран договор условийĕсене тĕпе хурса вĕсене укçан преми пачĕç. Кооперативсенче ĕçленĕ çынсем, ĕçе çĕнĕлле йĕркелени усăллă пулнине ĕненнĕ, çавăнпа вĕсем кооператив системине ырлаççĕ. Ертсе пыракансемпе ревизи комиссийĕн членĕсене суйлас ыйтăва та питĕ тĕплĕн татса пама, чăн-чăн хуçасене суйлама тăрăшрĕç.

Пĕлтĕрхи савăнтаракан кăтартусен факторĕсем çинчен калаçнă чухне, "Киклĕ" хуçалăха хулари шефсем - Нурлатри çул-йĕр тăвакан тата юсакан управлени коллективĕ пысăк пулăшу панине те палăртрĕç. Çакă яла, производство площадкисене тирпей-илем кĕртес ĕçсене пурнăçланинче, хирти ĕçсем вăхăтĕнче техникăпа тата çын вăйĕпе пулăшнинче те палăрнă. Акă отчетлă пухăва та НУАД представителĕ, тĕп инженер Ильгизар Валиев пушă алăпа килмен - хуçалăхри чи лайăх ĕçлекен виçĕ çынна хаклă парнесем пачĕ.

Пухăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - районти финанс пайĕн заведующийĕ Ф.Н.Губайдуллин хутшăнчĕ тата сăмах тухса каларĕ. Хуçалăхри реформăлас ĕçсен ăнăçлăхĕсене палăртнипе пĕрлех, Фарит Нилович ĕçе йĕркелемелли çĕнĕ формăсемпе малашне те усă курмаллине палăртрĕ, ку тĕлĕшпе пуçтарăннисен ыйтăвĕсем çине хуравларĕ, çав шутра, çĕр реформине тивекеннисем çине те. Çакă паллă: çынсене хăйсен хуçалăхĕн шăпи пăшăрхантарать, апла пулсан вĕсем пур запассемпе тата резервсемпе тухăçлăрах усă курмалли майсем тупĕç.

Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.



Загир Самигуллович таравалтлă та уçă кăмăллă çын. Çакă ăна пурнăçĕнче питĕ пулăшнă. Физкультура учителĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра вăл аслă шкула куçăмсăр вĕренсе пĕтернĕ, унтан ял Совечĕн председателĕ пулса вăй хунă. Çĕнĕ Элметри шкулта ĕçлеме тытăннăранпа вара 22 çул çитнĕ ĕнтĕ, вĕсенчен юлашки 7 çулне - директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса. Вăл историк, вĕсене вара халь уйрăмах çăмăл мар. Малтан вĕрентнисенчен нумайăшĕ çине халь урăхла пăхаççĕ вĕт. Çавăнпа та учителĕн ку е тепĕр историлле событие тĕрĕс хак парассине ачасене тĕрĕс ăнлантармалла, унăн нумай пĕлмелле, хушма литературăпа, пособисемпе усă курмалла, творчество лабораторийĕсем йĕркелемелле, хăйĕн пĕлўлĕхне тăтăшах ўстерме тăрăшмалла. Директор çумĕн тата ытти кирлĕ задачăсем те нумай вĕт-ха: шкул тата класс тулашĕнчи тĕрлĕ мероприятисем, вĕренекенсен пушă вăхăтне йăлана кĕмен тата çĕнĕлле формăсемпе усă курса йĕркелемелле, кашни ачана уйрăммăн пăхма, унăн халлĕхе палăрман пултарулăхне тупса аталантарма пулăшмалла. Загир Самигуллович çак ĕçсем хушшинче те пĕтĕм воспитани процесне ăста ертсе пырать, çакă шкул пурнăçне пуянлатать, интереслĕрех тăвать.

Сăнўкерчĕкре: Çĕнĕ Элметри вăтам шкулăн директор çумĕ З.С.Мухтаров.

# Шăпа

Măшăрпа эпир манăн Наталья Анисимовна мăнакка патĕнче хăнара пулнăччĕ, вăл ун чухне сывăччĕ-ха. Шăп çав вăхăтра унăн пĕлĕшĕ, интереслĕ те калаçма юратаканскер, килсе кĕчĕ. Пире вăл хăйĕн шăпи çинчен каласа пачĕ...

Хам эпĕ ялта çуралса ўснĕ. 1934 çулта мана чи хитре яша качча пачĕç. Вăрçăччен пирĕн Володя ывăлпа Леночка хĕр çуралчĕç, ашшĕ вĕсене калама çук юрататчĕ. ... 43-мĕш çулта суранланса пĕтнĕ мăшăрăм вăрçăран таврăнчĕ, 45-мĕш çулхи çуркунне, пурте çĕнтерў уявланă чухне, Мишана пытартăмăр эпир... Кайран Нурлата куçса килтĕмĕр. Эпĕ стройкăра ĕçлеттĕм. Хам çурма выçă, çĕтĕк атăпа тата фуфайкăпа, ачасене вара вĕрентеттĕм, çитерме, тăхăнтартма тăрăшаттăм. Пĕррехинче Ульяновск хулинчи инçетри тăван килчĕ, Володьăна хăйĕнпе пĕрле парса яма ыйтрĕ. Вăл халĕ те унта пурăнать - унăн икĕ ача тата пилĕк мăнук. Хĕрĕн пурнăçĕ вара йывăр пулчĕ. Çамрăк чухне Лена питĕ хитреччĕ, качча вара эрех ĕçекене тухрĕ. Ўсĕр пуçĕпе тапнă та вăл ăна - ачи ўкнĕ. Иккĕмĕшĕ вара вăхăтсăр çуралнă - нимĕнле савăнăç та çук. Упăшки Ленăна хĕнетчĕ те, кĕвĕçетчĕ те. Ăнмасть пурнăçĕ. Хуйха пула ĕçме тытăнчĕ... Эпĕ Володьăна чĕнсе илтĕм, вăл ăна Ульяновскра хăйĕн юлташĕпе паллаштарма каласса татăлчĕ - çирĕп сывлăхлă, авланман, хваттерлĕ. Лена ывăлне ман пата хăварчĕ те унта кайрĕ. Нумайлăха мар çав. Йĕре-йĕре таврăнчĕ - ĕçме чарăнайманнине пула ку арçынпа та пурăнайман. Качча тата икĕ хут тухрĕ, халĕ унăн виçĕ ывăл. Таса мар кĕпе-йĕмпе, çăвăнманскерсем килеччĕç вĕсем ман пата, мĕнпе пулăшайăп ĕнтĕ эпĕ, ватăскер? Лена вара манран та ватăрах курăнать - эрех никама та хитрелетместь çав.

Ывăл çулталăкне пĕр-икĕ хут килет, мăнуксемпе вĕсен ачисем вара - çук, билетсем хаклă теççĕ...

Хам вара питĕ ватăлса çитрĕм. Пуç çаврăнать, куççем начар кураççĕ, хваттерте те стенаран тытса çеç çўретĕп. Газ чĕртетĕп те ун çинчен мансах каятăп. Пĕрре сĕрĕм тивнипе кўршĕсем мана урама йăтсах тухрĕç. Вĕсем мана пăрахмаççĕ: пĕри çăкăр илсе килсе парать, тепри - сĕт. Пĕр лайăх хĕрача хваттере кĕнĕччĕ, анчах нумай пурăнмарĕ çав, ватă çын кама кирлĕ ĕнтĕ.

... Володьăн ачисемшĕн тунсăхлатăп эпĕ. Çапах çамрăк та сывлăхлисене вăйхалсăр ватăсенчен çўллĕ хўмесем уйăраççĕ. Чунсăрлăх, суккăрлăх хўмисем...

В.КОМОЛОВ.

# Пĕлтерўсем

1993 çулта туса кăларнă "Таврия" автомашина сутатпăр, хаклă мар. 2-29-84 номерпе каçхине шăнкăравламалла.

* * *

Икĕ пўлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Ломоносов урамĕ, 21-8.

* * *

Хулара çурт тума участок сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 139-5, Калашниковсенчен ыйтмалла.

* * *

Виçĕ çынран тăракан çемье сахăр завочĕн поселокĕнче хваттер тара илет. Телефон: 2-13-06.

* * *

Питĕ лайăх шайри "Волга" ГАЗ-21 сутăнать, хаклă мар, запас двигатель пур. Адрес: Садовая урамĕ, 2а-49.

* * *

"Искра" тĕслĕ ВАЗ-21083 сутăнать. 5-17-22 номерпе 17 сехетрен пуçласа 20 сехетчен шăнкăравламалла.

* * *

Кăрмăш микрорайонĕнче гараж сутăн илетĕп. Телефон: 5-23-67.

* * *

Дача сутăнать (Чулпан ялĕ), çурт, сарай, нўхреп, пусă, 29 сотка çĕр пур. Телефон: 5-10-47, адрес: Дружба урамĕ, 49.

* * *

"Нурлат-Октябрь суту-илў бази" АООТра ĕçлеме васкавлă кирлĕ:
- газ евĕрлĕ топливăпа ĕçлекен пăс хуранĕсен операторĕ, 3 çул ытла стаж пулмалла;
- электрик.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 5-43-50.

Астăвăм

## Миншакир Бакиров призĕшĕн

Кăçал февралĕн 2-мĕшĕнче Анат Нурлатри культура çуртĕнче М.Бакиров салтак-интернационалиста халалланă наци кĕрешĕвĕн районти ăмăртăвĕсем иртрĕç.

Кăçал вĕсем икĕ тапхăрпа пулчĕç. Пĕрремĕшĕ "Ăрусен тĕлпулăвĕ" ятпа иртрĕ. Кунта вăрçă ветеранĕсемпе вĕренекенсем тĕл пулчĕç. Вĕсемпе калаçнă май ветерансем хăйсен çамрăклăхне, вăрçăри юлташĕсене аса илчĕç, çамрăксене нихăçан та вăрçă, юн юхнине курмалла ан пултăр тесе ырă сунчĕç. Унтан шкул ачисем сăмах илчĕç. Вĕсем сăвăсем вуларĕç, юрăсем шăрантарчĕç. Юлашкинчен хăнасене парнесем пачĕç.

Мероприятин иккĕмĕш тапхăрĕ кĕрешӳçĕсен парадĕнчен пуçланчĕ. Спорт комитечĕн председателĕ Халил Фатучев ăмăртусем уçăлнине пĕлтерсе, афган-вăрçин инваличĕсемпе ветеранĕсен союзĕн Нурлат территорири уйрăмĕн председательне В.Мусина сăмах пачĕ. Вăл ачасене Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламларĕ, салтак-афганецсен ятĕнчен Миншакир амăшне - Зайнап аппана парне пачĕ.

Çамрăксемпе ĕçлекен пай заведующийĕ Р.Ханиева та пуçтарăннисене ырлăх-сывлăх сунчĕ. Кайран ялти мулла Сагит Ильмухин кĕрешӳçĕсене пиллерĕ.

Кăçал наци кĕрешĕвĕн ăмăртăвĕсен ялавне район тата республика чемпионĕсем Р.Рахматуллинпа Х.Валиев çĕклерĕç. Кайран пуçтарăннисем Афганистанта пуçĕсене хунă яшсене аса илсе пĕр минут чĕнмесĕр тăчĕç.

Ăмăртусене Анат Нурлатри, Тури Нурлатри, Çĕнĕ Иглаелĕнчи, Чулпанти, Çирĕклĕри, Киклĕри тата Нурлат хулинчи командăсем хутшăнчĕç.

Ачасем 9 виçе категорийĕнче ăмăртрĕç. Пирĕн, Анат Нурлатри кĕрешӳçĕсем çĕнтерни, урăхла каласан, сакăр виçе категорийĕнче пĕрремĕшĕсем пулни питĕ савăнтарчĕ.

Вĕсем çаксем: Р.Абдульманов (27 килограмм), И.Ишниязов (36 килограмм), И.Давлетшаров (40), Р.Рахматуллин (45), А.Ашуров (50), Ф.Алякимов (55), Х.Валиев (60), В.Ильмухин (60 килограмран ытла). 32 килограмма çитичченхи виçе категорийĕнче Нурлатри А.Гимранов пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Пирĕн ачасен çак спортри ăнăçлăхĕ вăл - вĕсен тренерĕсем Раиль Рахматуллин тата Ильсур Валеев тăрăшнин результачĕсем. Кунсăр пуçне, Р.Рахматуллина - кĕрешӳ мелĕсемпе ăста усă курнăшăн, А.Аюпова çĕнтерӳшĕн нумай тăрăшнăшăн ятарлă парнесем пачĕç.

Эпир çак ăмăртусен спонсорĕсене: ГАИ ертӳçисене, "Нурлатнефть" НГДУри профкома, НГДУн сĕт-çу комбинатне, сахăр заводне, сĕт-çу комбинатне, самоуправленин Анат Нурлат Советне тата хресченсен хуçалăхĕсен "Кондурча" ассоциацине тав тăватпăр.

Ачасене курма, кăмăлĕсене çĕклеме, хавхалантарма çав кун клуба ентешсем, ялти пултарулăх артисчĕсем Ф.Ильмухин, А.Тяваева, В.Куляева, Р.Гумерова та килнĕччĕ, вĕсем ăмăртусем вăхăтĕнчех хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

**Ф.АХМАДЕЕВА.**
**Анат Нурлат ялĕ.**

## ЮБИЛЕЙ



**Нумаях пулмасть пирĕн районта республикăри сăвăçăсем пулни çинчен эпир çырнăччĕ ĕнтĕ, вĕсемпе пĕрле Г.Тукай ячĕпе хисепленекен Патшалăх премийĕн лауреачĕ Гульшат Зайнашева та пулнă. Февралĕн 28-мĕшĕнче тутарсен Карим Тинчурин ячĕпе хисепленекен драмăпа комеди патшалăх театрĕн çуртĕнче сăвăçăн 70 çулхи юбилейне паллă тунă, унта пирĕн район представителĕ - администрацири социаллă пурнăç ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен ертсе пыракан специалист Р.Сунгатуллина хутшăннă, ентешсен ятĕнчен вăл саламлă сăмах тухса каланă. Эпир вăл каланă ырă сăмахсемпе килĕшетпĕр. Антив, пултаруллă сăвăçă малашне те пире хăйĕн сăввисемпе тата юррисемпе савăнтартăр.**

**Укерчĕкре: Г.Зайнашева Нурлат районĕнче хăнара.**

Ўлах юррисем

### *Улма йывăç çинче улми сахал*

Улма йывăç çинче улми сахал:
Улми пулас турачĕ хуçăлнă.
Пирĕн çамрăк пуçра ăс сахал:
Ăс парас атте-анне уйрăлнă.

Кĕске кăна сăхман - кĕмĕл тӳме
Мунча кĕме кайсан çухатрăм.
Çамрăк кăна пуççăм - çинçе пĕвĕм,
Çитĕнсе çитсессĕн хур пултăм.

Улмаях та чăпар ула тиха
Амăшĕнчен çапла çуралнă.
Аттепе аннене ӳпкелес мар:
Хамăра турă çапла çуратнă.

Леш аяккисенче хĕреслĕ манит,
Каçса илме каçми пулмарĕ.
Турă патĕнче ырлăх пит нумай,
Улăхса илме пусми пулмарĕ.

Чистайпала Хусан хушшинче
Кĕленче çăмарта кустартăм.
Кустарассине хам кустартăм,
Кустара пĕлмесĕр çĕмĕртĕм.
Çынтан ăс ыйтмарăм, хам пĕлмерĕм -
Ылтăн пек пуçăма çухатрăм.

Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.


**Германири малта пыракан фирмăсен материалĕсене сĕнетпĕр:**

стена панелĕсем, хăйех çыпăçакан пленка, карнизсем, мачча плитисем, симпотекс, ванна валли сĕтел-пукан, сантехника, урая тикĕслемелли тата ытти те. Заказсене каталогсем тăрăх йышăнатпăр. Хаксене чакаратпăр. Телефон: 5-39-39. Лицензи номерĕ Р-96 020937.

**Вĕрентӳ центрĕ (Лениногорск хули) мартăн 17-мĕшĕнчен çак специальноçсемпе вĕрентет:**

- баллонсене тултаракан;
- газпа нефть продукчĕсен изолировщикĕ;
- такелаж тата тиев çĕклекен хатĕрсен слесарĕ;
- электрооборудованипе ĕçлекен тата ăна юсакан электромонтер;
- промышленность автоматикинчи интеграллă микросхемăсем;
- кадрсемпе ĕçлекен инспектор тата делопроизводитель;
- платник;
- слесарь-сантехник.

Телефонсем: 2-34-45, 2-05-18. Общежити пур.

"Татпромстройбанкăн" Нурлат-Октябрь филиалĕнчи счетсем çинче укçа пур вкладчиксене Нурлат хулинчи филиалăн канторне васкавлă пыма ыйтатпăр.

Администраци.

**"Татнефть" привилегиллĕ акцисене сутăн илетпĕр.**

*Нурлат хулинчи Советская урамĕнчи 94-мĕш çуртра ("Родина" кинотеатр пулнă çурт) 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен ыйтса пĕлмелле. Телефон: 2-18-61. Лицензи номерĕ - 012-0036-100000.*


## ПĔЛТЕРӲСЕМ


*1994 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутатпăр. Адрес: Самар облаçĕ, Кушкă ялĕ, Куйбышевская урамĕ, 56.*

* * *

*Пахчаçăсен "Сахарник" юлташлăхĕнче сад пахчи сутăнать, 5 сотка. Телефон: 2-26-50.*

* * *

*Хуралтăсемлĕ çурт сутăнать. Пĕчĕк Хăмăшлăри Егороваран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Çурт валли 6х6 метрлă пура сутатпăр, хăпартман, участок пур. Телефон: 5-41-19.*

* * *

*1985 çулта туса кăларнă ВАЗ-2107 сутатпăр. Телефон: 5-16-35.*

* * *

*"Некрасовкăри" дача сутăнать. Телефон: 5-29-29.*

* * *

*Пахчаçăсен "Нефтяник" юлташлăхĕнче пӳртлĕ сад пахчи сутăнать. Телефон: 5-18-70.*

* * *

*Зузеево поселокĕнчи ултă кĕтеслĕ çурт сутăнать (çĕр участокĕ, шыв пур, газ кĕртеççĕ). Телефон: 5-27-40.*

* * *

*Кирпĕч сутатпăр, ашпа улăштарма пулать. Телефон: 5-21-22, 15 сехетрен пуçласа 17 сехетчен шăнкăравламалла.*

* * *

*Çурта (сад, мунча, пусă, чултан тунă икĕ гараж, 4 сарай пур, газпа ăшăтмалла) икĕ тата пĕр пӳлĕмлĕ хваттерсемпе улăштаратпăр. Телефон: 2-24-99.*

* * *

*1996 çулхи апрель уйăхĕнче туса кăларнă шурă тĕслĕ ВАЗ-21213 "Нива" сутăнать. Телефон: 2-12-63.*

* * *

*"НН" НГДУ бассейнĕ укçа тӳлесе абонементсен ушкăнне пухать. Бассейна 18 çул тултарнисем çӳреме пултараççĕ. Массаж, сауна, гидромассаж услугисем параççĕ. Бассейн телефонĕ: 65-8-60.*

* * *

*Лайăх шайри "Москвич-412" сутăнать. Телефон: 2-26-53.*

* * *

*Капиталлă гараж сутăнать. Адрес: Московская урамĕ, 5-16.*

* * *

*Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере (1-мĕш хут) икĕ пĕр пӳлĕмлисемпе улăштаратпăр. Телефон: 5-22-90.*

* * *

*ВАЗ-21083 сутăнать. Телефон: 5-14-99.*

* * *

*Западный поселокĕнче туса пĕтермен çурт мĕнпур материалсемпе пĕрле васкавлă сутăнать. Адрес: Кăрмăш поселокĕ, Дружба урамĕ, 14, Гальăран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*1994 çулта туса кăларнă хура тĕслĕ ВАЗ-2161 сутăнать. Телефон: 2-26-15.*

* * *

*1994 çулта туса кăларнă "рубин" тĕслĕ ВАЗ-21099 сутăнать. Телефон: 3-62-40.*

* * *

*Гараж тара паратпăр. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 6-25.*

* * *

*Газ колонки сутатпăр. Адрес: 60 лет Октября урамĕ, 19-15.*

**Тĕрлĕ тĕслĕ металл каяшне туянатпăр. Лицензи номерĕ А 0204 16м /97 /0266/ 001/л, 1997 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче панă. Адрес: Советская урамĕ, "Татсельхозмонтаж" ПМК.**

**1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 васкавлă сутăнать. Пура тума заказсем йышăнатпăр. Адрес: Ленинградская урамĕ, 11-3, 18 сехет хыççăн пымалла.**

**"Круиз" магазин сĕнет:**

лимонад 1,5 литр - 20 тĕрлĕ (апельсин, "Байкал", персик, квас тата ыттисем те) 3300 тенкĕ (Гиматдинов урамĕ, "Япала сутакан пасар" чарăну). Лицензи номерĕ Б-97 145285.

Ырă сунса кĕтетпĕр.



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.